Пурнăҫа, ҫĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, ҫавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАҪАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаҫат 1931 ҫулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуҫланă.* N 55 (4624) *1998 ҫулхи май (ҫу) уйăхĕн 16-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*

## Майăн 19-мĕшĕ - Республика пичет кунĕ

## Кирлĕ ҫын

***Хамрăннисем ҫинчен ҫырасси - ҫăмăл задача мар. Ҫынна тĕплĕн пĕлнĕ пек туйăнать пулин те, унăн пурнăҫĕнчи чи кирлине, характерне уҫсăн палăртса параймасран шикленетĕн.***

**Ĕҫтеш ҫинчен калани**

Унăн пурнăҫĕнче ăнсăртран пулнă ҫакĕҫ пысăк вырăн йышăннă. Учительница вĕсене типографие экскурсие илсе килнĕ. Линотип умĕнче хĕрача вăрах тытăнса тăнă, наборăн шăратнă пĕчĕк саспаллийĕсем йывăр йĕркесем пулса тăнине интересленсе сăнанă... Хăйĕн ăшĕнче вара шухăш тытнă: "Эпĕ те хаҫат тăвăп-ха. Ку шăпах мана кирли".

...Вăл шутланă пекех пулса тухнă. 1976 ҫулта Хусанти полиграфи училищине пĕтернĕ хыҫҫăн диплом илсен, упăшкине институт хыҫҫăн янă ҫĕре, Урала тухса кайнă. Кунта, Артемовскире, радиозавод типографийĕнче техника тексчĕсем пуҫтарнă. Производство режим тăрăх ĕҫленĕ, ҫавăнпа та вăл ҫав вăхăт ҫинчен каласа пама юратмасть. Нурлата ҫемье 3 ҫул иртсен



таврăннă. Фиагуль каллех типографие пынă. Кайран редакцие куҫнă, тăлмач пулса ĕҫлеме тытăннă, автор материалĕсен стилистикине вĕреннĕ.

(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).

## "ТУХĂҪ - 98" ПРЕСС-ГРУППА ПĔЛТЕРЕТ

Районти хуҫалăхсем ирхи культурăсене ăнăҫлă акса пĕтереҫҫĕ. Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Рассвет", "Родина", "Тан" ассоциацисенче сахăр завочĕн хушма хуҫалăхĕнче ĕҫ хăвăртлăхĕ малтанхи пекех пысăк. Юлашкисем иккĕшĕ ҫурхи тулă акма палăртнă лаптăксен ытларах пайне акнă хуҫалăхсен шутне кĕреҫҫĕ. "Игенче" хуҫалăхра тулă акма чылай лаптăк уйăрнă. Хуҫалăхсенчен чылайăшĕ урпа та, пăрҫа та акнă ĕнтĕ. Ирхи культурăсемпе пĕрлех ыттисене акассине те иккĕмĕш плана хăвармаҫҫĕ. "Киклĕ" тата сахăр завочĕн хушма хуҫалăхĕнче сахăр кăшманне пĕрремĕшĕсем пулса акма тытăнса, ҫак ĕҫе малалла ăнăҫлă пурнăҫлаҫҫĕ. Ку ĕҫ "Рассвет", Кузнецов ячĕпе хисепленекен, "Черемшан" ассоциацисенче, сĕт-ҫу комбиначĕн хушма хуҫалăхĕнче пысăк хăвăртлăхпа пырать.

Хуҫалăхсенче ҫаплах акнă анасене пусăрăнтарассине тата ытти агромероприятисене пурнăҫлассине пысăк тимлĕх уйăраҫҫĕ.

## Малта пыракансен речĕсем ӳсеҫҫĕ

"Алга" ассоциацири Рашит Загирович ФАРДИЕВ ДТ-75 агрегатпа кунне 60 гектар акса, смена нормине 207 процент пурнăҫланă.

* * *

Мичурин ячĕпе хисепленекен хуҫалăхри Валерий Игоревич НОВИКОВ, Т-4 агрегатпа пăрҫа акакансер, смена нормине 170 процент тултарать. Унăн ĕҫри юлташĕ Юрий Петрович ЛЕВАКОВ Т-70 тракторпа тăпрана пусăрăнтарнă ҫĕрте икĕ норма ытла пурнăҫлать.

* * *

Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен хуҫалăхри Гумер Миннеханович ВАЛИЕВ кунне 55 гектар ҫине ҫурхи тулă акса, икĕ нормăна яхăн (196 процент) пурнăҫланă.

* * *

"Киклĕ" ассоциацири Касым Самигуллин АШТРАПОВ кăҫал ҫуркунне ДТ-75 агрегатпа 310 гектар акнă.

## *Урăх вырăна куҫарнă*

Район администрацийĕн пуҫлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕҫленĕ ҫумне Флюра Рашидовна **Ногумановăна** администраци пуҫлăхĕн аппарачĕн ертӳҫи пулма куҫарнă.

* * *

Район администрацийĕн пуҫлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕҫлекен ҫумĕ пулма маларах РОО заведующийĕ пулса вăй хунă Набиулла Хайруллович **Абдуллина** ҫирĕплетнĕ.

* * *

Районти вĕрентӳ пайĕн заведующийĕ пулма унччен Нурлатри каҫхи шкул директорĕ пулса ĕҫленĕ Мингазиз Ахметович **Юнусова** лартнă.

## Хир ҫĕнĕ паттăрсене палăртать

***Чылай улшăнусем чăтса ирттерсе хресченсен хуҫалăхĕсен Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕ апрелĕн 2-мĕшĕнче ĕлĕкхи пысăклатнă составпах ĕҫлеме тытăннă. Вăтам, Анат, Кивĕ Чаллăсене татах пĕрлештернĕ. Халь "Нурлат" агрофирма составне кĕрекен ҫак хуҫалăх районта чи пысăкки шутланать. Сухаламалли ҫĕрсем кунта 6415 гектар, ку вăл районта сухалакан ҫĕрсен 7,2 проценчĕ.***

***- Анат Чаллă ҫывăхĕнчи сăрт ҫинчен пăхсан та пирĕн хирсен вĕҫĕ-хĕрри курăнмасть. Ҫакăн пек пысăк лаптăксенче мĕн чухлĕ ĕҫ пурнăҫламалла, - тесе шутлаттăм. Анчах та халь хăнăхрăм, куҫ хăрать те алă тăвать теҫҫĕ вĕт.***

***Хуҫалăх ертӳҫи В.АБДРАХИМОВ кăна хаҫат валли кăна мар, хăй хумханнине пĕлтерес тесе ҫеҫ каларĕ. Халь вăл ҫав сăрт ҫине хăпарсан, хăйĕн иккĕленĕвĕсене сирсе ярĕ тесе шутлатпăр: нумай ҫул ӳсекен курăксене сӳреленĕ, апатлантарнă, кĕрхи культурăсене "минералка" кĕртнĕ, нӳрĕк тытнă. Леш хирте урпа акаҫҫĕ, лере вара - тулă...***

***Хирсенче, мухтав Турра, шанчăклă яшсем ĕҫлеҫҫĕ, вăхăта та, тырпула та хаклама пĕлеҫҫĕ. Хăшĕ-пĕринпе пире паллашма тӳр килчĕ. Аяларах вĕсенчен иккĕшĕ ҫинчен.***

### *Аверьяков*

Юлашки икĕ ҫул хушшинче Николай Аверьяков пурнăҫĕнче чылай улшăнусем пулса иртнĕ. Тăватă ҫул каярах СПТУра вĕренсе тухнă хыҫҫăн тăван ялтах ĕҫлеме юлнă - кунтан ниҫта та каяс килмен. Пĕлтĕр хуҫалăха ҫĕнĕ ДТ-75 трактор илсе килсен ăна Николая панă. Мĕнле-ха ҫак шанăҫа тӳрре кăлармăн, вăл тăрăшса вăй хунă.

Ĕҫчен яша хĕрсем те



Ӳкерчĕкре: Н.Аверьяков.

час асăрхаҫҫĕ ҫав. Вăл хăйсен ялĕнчи Наташăна суйласа илнĕ, кăҫал ҫуркунне вĕсем пĕрлешнĕ. Хуҫалăх ҫамрăксене икĕ хутлă ҫуртра пӳлĕм уйăрса панă.

Кăҫалхи ака тĕлне Аверьяков ҫемьеллĕ ҫын пулчĕ, ҫавăнпа ăна ĕҫне те яваплине шанса панă - акма. Унччен вăл кĕрхи культурăсене апатлантарнă, халь вара урпа акать. Хăйне улăштаракан В.И.Корневпа вĕсем икĕ сменăпа акаҫҫĕ. Владимир Иванович шофер пулсан та ака вăхăтĕнче трактор ҫине куҫать. Ҫапла ĕҫлеҫҫĕ вĕсем Николайпа, пĕр-пĕрне пулăшса, канашласа. Вĕсем ĕҫлекен "Дружба" кооперативăн ертӳҫи Сергей Михайлович Черепанов та хиртен каймасть тесен те юрать. П.С.Синдряков, П.В.Родионов, А.М.Порфирьев сеяльщиксем те вăр-вар та ҫаврăнăҫуллă ĕҫлеҫҫĕ. Удобренисемпе вăрлăхсем турттаракан Ю.Б.Леуковпа И.И.Савадеров та килĕсенче пулаймаҫҫĕ, талăк тăршшĕпех хирте: кунтах кăшт тĕлĕрсе, апатланкаласа илеҫҫĕ те татах ĕҫе пуҫăнаҫҫĕ. Кунта конвейера питĕ лайăх йĕркеленĕ: заправка та, вĕри апат та хиртех, кĕске ĕҫлĕ канашлусене те ана ҫинчех ирттереҫҫĕ. Юлашкинче кооператив членĕсем А.В.Родионовпа А.П.Екамасовăн, тулă акаканскерсен, пăрҫа акакан О.В.Поповăн ĕҫĕсемпе интересленчĕҫ. Сергей Михайлович ĕҫсем аван пыраҫҫĕ, яшсем тăрăшаҫҫĕ, хăвăртлăха ан чакарăр, тесе хавхалантарать.

Кăҫалхи ҫул ансат пулманнине вĕсем пурте лайăх ăнланаҫҫĕ, кунта ҫаврăнăҫуллă пулнипе пĕрлех асăрханулла пулни те кирлĕ, кайран тухăҫа та хăйсенех пухса илмелле вĕт. Кĕрхи культурăсем лайăх сыхланса юлни вара вĕсене питĕ савăнтарать. Кĕркунне акса хăварнă 360 гектартан пĕр метрне те тепĕр хут акмалла мар. Минераллă удобренисемпе кăна тепĕр хут апатлантарма тӳр килет. Ҫурхи культурăсене вăхăтлă акса пĕтерес тесе ĕҫе икĕ сменăпа йĕркеленĕ. Ҫапла майпа, хальхи вăхăтра вăрлăх тасатнă ҫĕрте вăй хуракан Наталья Николая шоферсенчен кăна салам каласа ярать. Ҫамрăк мăшăрсем Аверьяковсем пулас тухăҫшăн тăрăшнине ан тив, хир те пуян тухăҫпа савăнтартăр!

(Вĕҫĕ 4-мĕш стр.).

# Майăн 19-мĕшĕ - Республика пичет кунĕ

## Яланах "Туслăхпа"!

Акă каллех, йăлана кĕнĕ тăрăх тесен те йăнăш мар пулĕ, мĕншĕн тесен июль уйăхĕнче район хаçачĕ 67 çул тултарать, редакци коллегийĕ хăйĕн обществăлла корреспонденчĕсене, çаплах 10 пин ытла вулакана саламлать тата тав тăвать. Çакна май вăрçăпа ĕç ветеранĕн, нумай çул хушши район хаçачĕн обществăлла корреспонденчĕ пулса тăракан Александр Дмитриевич Дмитриев çырăвĕн йĕркисене илсе кăтартни тĕрĕс пулĕ. Вăл çапла çырать: “Пирĕн район хаçачĕн тăрăшулăхне тивĕçлипе хакламалла. Унăн страницисем çинче - ахаль ĕçченсем, ветерансем, район летописĕн истори факчĕсем - пирĕн халăхăн чăн-чăн патриотизмĕн тата интернационализмĕн свидетелĕсем. Вулакан вун-вун çын ятĕнчен район хаçачĕн ăнланмалла, тĕрĕс, çывăх сассишĕн пысăк тав”.

Мухтанмасăр калатпăр: пирĕн пултарулăха çапла хак пани пире хакла ларать. Халь, прессăна идеологи енчен кăтарту çук чухне, вулакансемпе пĕр чĕлхе тупма çăмăлах мар. Кунта пире хаçат ĕçĕнче вун-вун çул хушши тĕрĕслев иртнĕ çирĕп правило пулăшать: вулакансемпе пĕрле пулмалла, вĕсен савăнăçне, хуйхи-суйхине пĕрле чăтма пĕлмелле, çав вăхăтрах вĕсенчен çур утăм маларах пымалла. Кĕскен каласан, вĕсене ăнланса лайăх итлеме пĕлмелле, сăмахпа çеç мар, ĕçпе те пулăшмалла...

Çакăн пек пĕр-пĕрне шаннине сыхласа хăварма пире (сире те, хисеплĕ вулакансем) пирĕн пурнăçри тĕрлĕ событисене чунĕсем туртнипе тимлĕх уйăрмасăр чăтайман, туйăмлă, творчествăлла çынсем пулăшаççĕ. Паян эпир пирĕн штатра тăман чи активлă корреспондентсен ячĕсене асăнатпăр. Кусем, паллах, пирĕн аксакалсем - учитель-пенсионер, краевед, район хаçачĕпе пĕрле 50 çул ытла ĕçлекен И.Л.Сандлер, тата корреспондентăн çавăн чухлĕ стажлă, Раççей çыравçисен союзĕн членĕ, чăваш писателĕ Ф.А.Савгачев. Кăчăканлăри Закия Исмагилова, Çĕнĕ Амзяри Сания Фатхутдинова, Çирĕклĕри Исхак Шайхиев, Чулпанти Мунавара Усманова, Тури Нурлатри Фаузия Муххамметова, Вăтам Хăмăшлăри В.Ефремов, Киклĕри Роза Маслахова ялкорсем те хаçатпа пĕрле нумай çул хушши ăнăçлă ĕçлеççĕ. Юлашки çулсенче “хулари” корреспондентсен речĕсем те йышланаççĕ. 20 çул ытла “Туслăхпа” тачă çыхăну тытакан Х.Аюпов (ОГАИ начальникĕ), “ӐН” НГДУ инженерĕ В.Бурайкин, Х.Фатучев (спорткомитет председателĕ), В.Комолов пенсионер, Н.Квашнина фотограф çумне Л.Тафеева, В.Поселеннов, А.Григорьев, Н.Васильев, И.Низаметдинова, Д.Шаяхметова тата ыттисем хушăнчĕç.

Пирĕн обществăлла корреспондентсене пурне те Республика пичечĕн кунĕпе саламланă май вĕсене ялан творчество шыравĕнче пулма, вулакансене хумхантаракан кăсăк публикацисем çырма, çирĕп сывлăх, çемьесенче тăнăçлăх, телей сунатпăр. “Туслăх” яланах сирĕнпе пулнине ан манăр!

## Кирлĕ çын

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Сайра-хутра хăй те пĕчĕк заметкăсем çыркаланă. Вăл кăна та пултарнă - событисенче е фактсенче тĕп саманта палăртма пĕлнĕ, кĕскен те туйăмлă. Журналистикăра вара документсен тĕрĕслĕхĕ тата лирика питĕ кирлĕ.

Редактор пуçарăвĕпе редакци коллективĕ компьютер технологийĕ çине куçма шутласан, хĕрӳ ĕç пуçланчĕ, ăна пĕрремĕшĕ пулса пурнăçлакансенчен пĕри Фиагуль Мустафина пулчĕ, вăл ку ĕçе питĕ пикенсе тытăнчĕ. Çĕнĕ ĕç ăна илĕртнĕ те, çав вăхăтрах хăратнă та. Кĕскен каласан, çурмалла.

Хальхи вăхăтра Фиагуль Мустафина çăмăл мар ĕç пурнăçлать - вăл кашни эрнере “Дружба” хаçатăн виçĕ номерне верстклать. Çакă мĕнле чăкăлтăш ĕç пулнине вара эпир хамăр кăна пĕлетпĕр. Макетсем, полосасенче материалсене пĕлсе вырнаçтарасси, шрифтсем, материалсен ячĕсене тата заставкăсем суйласа илесси, текстсенчи йăнăшсене тӳрлетесси, сăнӳкерчĕксене сканерлесси... Техника “забастовка” тума пултарать пулин те, Фиагуль вара хăйĕн чăтăмлăхĕпе, пултарулăхĕпе тĕлĕнтерет. Вăл хăйĕн тивĕçне ахаль кăна мар, тĕплĕн, кăсăкланса пурнăçланине ĕçтешĕсем тахçанах асăрханă.

- Паллах, халь ĕçлеме интереслĕрех, - тет Фиагуль Мустафина. - Компьютер вара мĕн тума пултарать-ха? Полосана хама килĕшнĕ пек тумасăр лăпланмастăп. Уйрăмах “Литература страници”, “Буратино”, “Светлица” полосасене верстклама юрататăп. Тепĕр тесен, юлашки çинчен эпир манса кайрăмăрха.

Паллах ĕнтĕ, вăл ывăнать. Ку ĕçре питĕ тимлĕ пулмалла вĕт. Эрнекун, редакци “УАЗикĕ” Димитровград хулине çул тытсан кăна вăл эрне вĕçленчĕ теме пултарать. Анчах та тунтикунччен çес. Кайран каллех çĕнĕ эрн[illegible] пуçланать.

**Т.НАЗАРОВА.**

# Нурлат хулин типографийĕ: хальхи шай тата малашлăх

***Тутарстан Республикин Министрсен Кабинечĕ “Тутарстан Республикинче республика полиграфине тата кĕнеке издательствине 1997-2001 çулсенче пулăшасси” тĕллевлĕ программа çирĕплетнĕренпе çулталăк çурă иртрĕ ĕнтĕ. Кунта хулари тата районсенчи полиграфи типографийĕсене тĕреклетес тата аталантарас, çавна май вырăнти хаçатсене кăларассине централизацилес, офсет çине куçарас тĕлĕшпе мерăсем палăртнă. Тутарстан Республикинче информаципе пичет Министерстви çирĕплетнĕ тăрăх, Нурлатри типографире Кама леш енчи 16 хаçата пичетлĕç. Çĕнĕ технологи редакцисене автономиллĕ пулма тата хут туянас, изданисене ярас тата ытти ĕçсенчен хăтăлма (кусене пирĕн редакци республикăра пĕрремĕшĕсен шутĕнче çирĕплетрĕ) май парĕ. Паллах ĕнтĕ, программа пурнăçласси çинчен калама ир-ха - полиграфи оборудованийĕ питĕ тĕрĕс ĕçлет, кăткăс, çавăнпа та хаклă. Нурлат типографийĕн коллективĕ, çакă çăмăлах мар пулин те, производствăна модернизацилеме тата хальхи вăхăтри техника алла илме тытăннă.***

- Эпир малашлăха палăртса, реконструкципе юсавран пуçларăмăр, - каласа парать типографи директорĕ Ринат Набиуллович Абзипаров. - “Дуслык” хаçат редакцийĕ компьютерпа наборласа версткăлассин технологи процесне хăй тĕллĕн алла илсе хаçата Димитровградра пичетленипе пирĕн производство лаптăкĕсенчен чылай пайĕ пушанчĕ, çавăнпа та вĕсене офсет валли хатĕрлеме май пур. Ку, паллă ĕнтĕ, пире малашне хаçатсене пысăк пахалăхпа кăларма май парĕ. Чи малтан эпир компьютер залĕ хатĕрлеме пуçларăмăр. Пĕр участокра явапла секретарьсемпе редакторсем валли ĕç вырăнĕсем турăмăр. Пичетлесе çитермелли процесăн участокне хатĕрлерĕмĕр. Йăла пӳлĕмĕсене те оборудованилерĕмĕр. Район хаçачĕсене централизациленĕ майпа кăлармалли системăра квалификациллĕ тата ăста кадрсем ĕçлĕç. Специалистсене эпир Хаçат-журнал издательствинче хатĕрлеме планлатпăр, кун пирки калаçса татăлнă ĕнтĕ.

Предприятире ырана кăна палăртнă плансемпе пурăнмаççĕ, хальхи рынокăн йывăр условийĕсенче çухалса каяс марччĕ, профессионализма çĕклесчĕ тесе тăрăшаççĕ. Кунта пуçарулăх, оперативлăх, çаврăнăçулăх, çирĕп дисциплина, тĕрĕслев пысăк вырăн йышăнаççĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх, переплет ĕçне пурнăçлаççĕ, нумай тиражлă бланксем, афишăсем, проспектсем, буклетсем, саламлă адрессем, визит карточкисем тата этикеткăсем туса кăлараççĕ. 1997 çулта типографи 1024 миллион тенкĕлĕх 1694 пин лист бланк продукцийĕ туса кăларнă.



Ӳкерчĕкре: типографи переплетчици Н.Г.Моисеева.

Анчах та ĕлĕкхи виçепе нумаях ĕçлесе илеймĕн, кунта май пулнă таран производствăна çĕнетме шутлаççĕ. Редакци-издательство икĕ комплекснe, тĕрлĕ тĕслĕ принтерпа сканер туянса хута ятăмăр, копи ӳкерсе йышлантаракан техникăн участокне йĕркелерĕмĕр. Хаçатăн пĕр дубляжне версткăласа кăларакан малтанхи участокри лицензие те туянтăмăр, кăçалхи январь уйăхĕнчен пичетсемпе штампсем - çаврака, кĕteслĕ, тӳркĕтеслĕ тата факсимиле туса кăларатпăр. Халь заказсем кӳршĕ районсене памалла мар. Налук инспекцийĕ, инвентаризаци бюровĕ, 547-мĕш ПМК, строительство материалĕсен комбиначĕ, пушар хуралĕн инспекцийĕ, чылай уйрăм предпринимательсем ку услугăпа усă курчĕç ĕнтĕ.

Кунта хушма хатĕрсем туянасси çинчен те шутлаççĕ. Юлашки çулталăк çурăра типографи Хусанти элитлă “Абак” фирмăпа, Тутарстан рынокне ют çĕршывра туса кăларнă оргтехника, копи ӳкерекен оборудовани тата материалсем тивĕçтерессипе специализациленнĕскерпе, тачă çыхăнса ĕçлет. Производствăна çĕнетме 300 миллион тенкĕпе усă курнă - кунта та предприяти укçа дотацийĕсĕрех пултарнă.

Паллах ĕнтĕ, пысăк ĕçе йывăрлăхсемсĕр пурнăçлама çук. Рынок условийĕсенче пĕчĕк коллектива уйрăмах йывăр, тăкаксем тухаççех. Типографире вăтам ĕç укçи 1183 пин тенкĕ (кивĕ укçапа) шутланать пулсан, ăна та вăхăтлă параймаççĕ. Ку йывăрлăх вара çак предприятире çеç мар. Полиграфистсем шутланă тăрăх, хут, сăрăсем тата ытти питĕ хаклă, çавăнпа та тупăшăн кашни тенкишĕн тăрăшма тивет. Коллектив заказсен пакетне ӳстерессипе тата продукцие сутмалли рынока анлăлатассипе питĕ интересленет. Ĕçленĕ май вăл полиграфие аталантармалли пилĕкçуллăх программин тĕллевĕсене, унăн тĕп кăтартăвĕсене асра тытать, патшалăх предприятийĕ пулнă май экономика тĕлĕшпе пулăшасса шанать. Коллектив вара çĕнĕ условисенче активлă вăй хума хатĕр. Кăна цифрăсем те çирĕплетеççĕ. 1997 çулхи продукци калăпăшĕ, 1996 çулхи шайпа танлаштарсан, 125 процент шутланать. Рентабеллĕх - 30 процент, таварлăх продукцийĕн пĕр тенкĕ пуçне тухакан тăкак чакнă, ĕç тухăçлăхĕ те ӳсет.

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

# Хир çĕнĕ паттăрсене палăртать

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).



*Демидов*

Семен Сергеевич Демидов хăйĕн тракторĕпе 26-мĕш çул ĕçлет. Яланах ĕçре пулнипе иртнĕ çул юбилей çулĕ пулнине те манса кайнă: шутлама тытăнсан кăна аса илнĕ. Çĕр ĕçченĕсем юбилей датисене шутлама хăнăхман вĕт. Вĕсемшĕн юбилей - пуян тухăç пулсан. Ку вара уяв! Анат Чаллăри тракторист иртнĕ çул шăп кăна çавăн пек туйăмпа ĕçленĕ. Çавăнпа кăçалхи çуркуннене те вăл чăтăмсăррăн кĕтнĕ, пурне те асăрханă, малтанах пĕлнĕ, пăшăрханнă. Пире çапла каларĕ:

- Çĕр хуллен ĕлкĕрет, кăçал тăпра йывăр. Хирти юр ирĕлме пуçласанах вăл çапла пуласса пĕлтĕм, мĕншĕн тесен çĕр çийĕн пăс çĕкленмерĕ. Апла пулсан, ăшă çитмен, çĕр вăрах вăхăт хушши ăшăнать, çавăнпа та хирсем те час ĕлкĕрмеççĕ...

Çапла майпа, хирсене суйласа кăна ĕçлеме тӳр килет. Çурхи тулă акакан участокра та Семен Сергеевич йĕпе вырăнсене акмасăр хăварать, хăйне улăштаракан хăйĕнпе пĕртăван Петра та тимлĕ пулма хушать. Петр хăй те, мĕнле калас, тракторпа 15 çул ĕçлет ĕнтĕ, опыт пур. Апла пулин те, пиччĕшĕн сăмахне итлемелле. Демидовсенчен чи асли - Владимир Петрович ку хуçалăхра 20 çул ытла ĕнтĕ сварщик пулса вăй хурать. Вăл та мĕнпур ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Демидовсем пурте хăйсен ятне ярас мар тесе тăрăшаççĕ. Семен Сергеевич вара ака вăхăтĕнче уйрăмах яваплăх туйса ĕçлет. Çакна ăнланмалла, акă 10 çул ĕнтĕ вăл çак анасем çинчи тухăçа комбайнпа хăй пухса илет. Вăл çĕр ĕçне юратать тата хаклать.

Сухара Семен Семеновичăн чунне пăшăрхантарман ĕç çук та пулĕ. Унăн хăйĕн юратнă хирĕ пур, çынсем ăна хăйсем хушшинче "Иккĕмĕш стан" теççĕ. Çав участок 200 гектартан кая мар пулать, хăйĕн калăпăшĕпе те, тикĕс те таса "сăнпичĕпе" те савăнтарать. Анисем тикĕс те вăрăм. Çитмĕлмĕш çулсенче кунта кашни гектартан 50-шар центнер ыраш пухса илнĕ - çакăн пек пысăк тухăç паракан хире мĕнле юратмăн?!



- **Эсир мĕнле культурăсене акма ытларах юрататăр?**

Демидов вăрах шухăшламарĕ.

- Паллах, тулла. Унран çăкăр пĕçереççĕ. Çĕр çинче çăкăртан асли çук. Çăкăр çинче тĕнче тăрать.

Механизатор каланă çак сăмахсем унăн чунчĕрине тарăн пăшăрхантарнине уççăн пĕлтернĕ пек туйăнчĕ. Тырпула çакăн пек хастар çынсем ӳстереççĕ вĕт, çавăнпа та вăл ăнса çитĕнет. Ялсенче ăслă-тăнлă та пултаруллă çынсем пур пулсан, унăн малашлăхĕ - шанчăклă алăсенче.

Манăн шухăшсене вулана тейĕн, трактор кабининчен 8-9 çулхи арçын ача курăнчĕ. Механизатор йăл кулнипе сăн-пичĕ çуталчĕ: "Кĕçĕнни, Юрий, аслисем - хĕрсем. Ку яланах хампа пĕрле, трактор патĕнче явăнать".

Ашшĕ хăйĕн пурнăç йĕркипе кăмăллă пулни сисĕнет. Кам пĕлет-çке, тен, вăхăтиртнĕçем шăп Юрий Семенович ашшĕн ĕç вырăнне йышăнĕ. Тĕрĕссипе çапла пулса тухсан, çамрăк Демидов аслисен: "Çĕр çинче çăкăртан асли çук" пысăк пĕлтерĕшлĕ чăнлăхне тӳрре кăларасса шанăç пур.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

**Ӳкерчĕксенче: С.С.Демидов ывăлĕпе; О.В.Попов, В.П. Макаров, В.А.Макаров акаçăсем.**

# Вĕрентекене ыра сунса

1950-мĕш çулсен вĕçĕнче Якуркел ялĕнче вăтам шкул уçăлчĕ. Пирĕн телее. Атту, пиртен аслăраххисем, вăтам пĕлӳ туянма Якаелнех çӳретчĕç.

Эпир те хамăр ялсенчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсене пĕтернĕ хыççăн: Анат Чаллă, Хăмăшлă, Чиешне, Чăваш Менчи, Хуралту çамрăкĕсем вĕренĕве малалла тăсма Якуркел шкулне пухăнтăмăр.

40 çула яхăн Якуркелĕнчи вăтам шкула вĕренсе тухни, 20 çул ытла Хусанта аслă пĕлӳ туянни. Кунсем иртеççĕ, çулсем шăвaççĕ, пуçри çӳçсем сайралаççĕ, кăвакараççĕ, çапах та Якуркел шкулне çӳренĕ кунсем, çулсем асран каймаççĕ. Халь те пулсан Федор Михайлович Макаров, Аркадий Фролович Ендиряков, Анатолий Николаевич Гришов, Василий Павлович Давыдов, Виктор Иванович Павлов, Петр Михеевич Трофимов, Вениамин Ефимович Фадькин, Илья Григорьевич Евлентьев, Клавдия Степановна Лизунова, Антонина Ефимовна Гришова тата ытти учительсене ырăпа асăнатăп. Çӳлте асăннисенчен нумайăшĕ хура çĕр айне кĕнĕ. Тăприсем çăмăл пулччăр вĕсен.

Уйрăм сăмах Федор Афанасьевич Савгачев çинчен калас килет. Ăслă-тăнлă, пысăк опытлă учитель-журналист-писатель. Вăл пире, чăваш ачисене, тăван чĕлхе асамлăхне, ăсталăхне, пуянлăхне , атте-аннесем, асатте-асаннесем калаçнă чĕлхене малалла упрама, юратма, çак чĕлхепе уççăн, пĕр вăтанмасăр, хăрамасăр калаçма вĕрентетчĕ, хамăр курни-илтнине, пĕлнине, сăнанине, шухăш-кăмăла чăвашла пичетленекен хаçат-журналсен редакцине çырса пĕлтерме сĕнетчĕ. "Йăваран тухнă кайăк чĕппи те малтанах вăйлă вĕçеймест. Вĕçевре унăн çуначĕсем аталанаççĕ, вăй илеççĕ. Сирĕн те малтанах ăнăçлăх пулаймĕ. Хăраса ан ӳкĕр. Çыравçă çырса ăсталанать ", - тетчĕ вăл пире.



Çыравçăсен уявĕ ячĕпе саламласа, хама вĕрентекенĕме тав тăватăп.

**В. ЕФРЕМОВ.**

# Пĕлтерӳсем

*СПТУ çывăхĕнче строительство материалĕсемлĕ участок сутăнать. 5-14-29 номерлĕ телефонпа 17 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Тентлă çĕнĕ "Газель", 28 пин километр çӳренĕ, "сафари" тĕслĕ ВАЗ-2106, 1 пин километр çӳренĕ "Днепр" мотоцикл, 5 пин километр çӳренĕ "ИЖ-ЮПИТЕР-5", çĕнĕ автоприцеп - 200 килограмм, "Фотон", "Рубин", "Славутич", "Рекорд" телевизорсем сутатпăр. Нурлатри телефон: 2-26-64, Димитровградри - 2-24-23.*

* * *

*Телебашня çывăхĕнчи гараж сутăнать. Телефон:2-23-60.*

* * *

*Приватизациленĕ икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутатпăр (1 хутлă çуртра), мунча, канализаци, пахча пур. Телефон: 3-31-51.*

* * *

*Лайăх кузовлă "ЗАЗ-968" МД е МГ сутăн илетĕп. Телефонсем: 5-42-71, 5-19-38.*

* * *

*6х6 метрлă çурт пури тата пахчаçăсен "Локомотив" юлташлăхĕнче дача участокĕ сутатпăр. Адрес: Лобачевский урамĕ,67.*

* * *

*Мунча пури сутăнать. Телефон: 5-42-89.*

* * *

*Школьная урамĕнчи 53-мĕш номерлĕ çурта икĕ тата пĕр пӳлĕмлĕ хваттерсемпе улăштаратпăр. Шакировсенчен ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Лайăх шайри ВАЗ-2101 сутатпăр, кузовĕ юсав хыççăн. Адрес: Овражная урамĕ,3.*

* * *

*Хуралтăвĕнче дача сутăнать. Телефон: 2-13-28.*

* * *

*Çĕнĕ стенка тата дача сутатпăр. Телефон: 5-13-42.*

* * *

*Куйбышев урамĕнчи 76-мĕш номерлĕ çуртри 1-мĕш хваттер сутăнать. Декабристсен урамĕнчи 11-мĕш çуртра ыйтса пĕлмелле.*

**ТИСБИ экономикăпа право колледжĕн Нурлатри филиалне виçĕ факультетăн кусăмлă уйрăмне йышăнасси тытăннă**

**- юридически факультет, специализаци: патшалăх-право, хуçалăх-право тата предпринимательство ĕçĕ, страховани прави, таможня прави;**

**- экономика факультечĕ, специализаци: пĕрлехи менеджемент, предприятие тытса пырассине йĕркелесси;**

**- информатика факультечĕ, специализаци: информатика тата программировани, делопроизводство, бухучет, экологи.**

**11 класс пĕтернисем 2 çул та 10 уйăх вĕренмелле. 4200 тенкĕ тӳлемелле; таможня прави - 4500 тенкĕ.**

**9 класс пĕтернисем 3 çул та 10 уйăх вĕренмелле. 3100 тенкĕ тӳлемелле. Ыйтса пĕлмелли телефон: 2-11-63, РОО, методика пӳлĕмĕ. В.М.Камалова.**

**Колледж директорĕ хутшăннипе пуху 1998 çулхи майăн 18-мĕшĕнче ДЮЦ çуртĕнче (пионерсен çурчĕ пулнăскерте, 2-мĕш хутра) 16 сехетре пулать. Лицензи номерĕ 16-213, РФ аслă вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен Госкомитечĕ панă.**

***Майăн 19 тата 22-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче "Ильдан" фирмăн ярмăркки пулать. Хаксем 30 процент йӳнерех.***

***Суту-илӳре:***

***- тĕрлĕ тирсенчен çĕленĕ çухаллă хĕллехи пальто;***

***- тирсенчен çĕленĕ пальто;***

***- тирсенчен çĕленĕ çĕлĕксем;***

***- тирсенчен çĕленĕ кĕрĕксем, курткăсем;***

***- кĕрхи - çурхи пальто.***

**Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.**

**Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.**

**Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ**

**Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.**

**ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.**

**ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.**

**Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.**

**Регистрациленĕ номерĕ 34.**

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860.